чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

ШĂМАТКУН 2014, ноябрь 1

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

217 /26623/ № Хакĕ ирĕклĕ www.hypar.ru

## Уяв ячĕпе

**Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!**

**Сире Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!**

Çак уяв пиреншĕн уйрăм пĕлтерĕшлĕ. Халăх пĕрлĕхĕ, вăл паттăрлăх кăтартма хатĕр пулни – кирек хăш самана-ра та Тăван çĕршывăмăрăн мăнаçлăхĕн никĕсĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Чăваш Ен ытти тăрăхран эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ 70 пин ытла çынна йышăннă, вĕсемшĕн иккĕмĕш тăван кил пулса тăнă. Республикăра пурăнакансем хăйсен мĕн пуррине тарса килнисемпе çурмалла пайланă, тăван çĕрне пăрахса хăварма тивнĕ çынсене хăйсен чунĕпе ăшăтнă.

Хальхи вăхăтри Чăваш Ен халăхĕ те тараватлăхне тата ырă кăмăлне туллин çирĕплетрĕ: ялан пурăнакан вырăнтан ирĕксĕртен куçса килме тивнĕ Украина çĕршывĕн пин-пин гражданинĕ пирĕн патăмăрта хăйне килĕнчи пек туйтăр тесе мĕн кирлине пурне те туса пачĕ.

Пĕрлĕхпе пĕрлешӳлĕх, паттăрлăх тата пирĕн çынсем хăйсене шеллеменни, йывăрлăхсене пĕрлехи вăйпа çĕнтерме пĕлни кăçалхи юпа уйăхĕн варринче, республикăна çут çанталăк инкекĕ сиен кӳнĕ вăхăтра, туллин палăрчĕ. Эпир хамăра пулăшу кирли çинчен пĕлтерсен Раççейĕн 9 регионĕнчи энергетика комплексĕн ĕçченĕсем пире пулăшма тӳрех килĕшрĕç. Юсав бригадисем, хула-районсенчи çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен ĕçченĕсем, Чăваш Енре пурăнакан мĕн пур çын туслăн тата васкавлăн ĕçленине пула çанталăкăн кăткăс та йывăр условийĕсенче юсав ĕçĕсене чи кĕске тапхăрта халиччен пулман калăпăшпа туса ирттерме тата япăх çанталăка пула сиен тӳснĕ ялсене электричествăпа тивĕçтерме май килчĕ.

Çапах та эпир инкекре кăна мар чăмăртанма пĕлетпĕр. Вăйсене пĕрлештерсе, 2014 çулхи октябрь уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче эпир Раççейри, Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхне кĕрекен çĕршывсенчи тата тĕнчери спорт пĕрлĕхĕ валли чи çӳллĕ шайра анлă та аслă «Раççей – спорт çĕршывĕ» форум йĕркелесе ирттертĕмĕр. Раççей Президенчĕ Владимир Путин, Раççей Федерацийĕн Правительствин членĕсем, тĕнчери 20 çĕршывпа Раççей Федерацийĕн 81 субъекчĕн представителĕсем чăваш халăхĕн тараватлăхне туллин туйса илчĕç, чун-чĕрине иксĕлми вăй-халпа тата лайăх кăмăл-туйăмпа пуянлатрĕç.

Хаклă туссем, эпир чăннипех те пĕр пĕтĕм халăх! Ялпа, мирпе, халăхпа пĕрле эпир кирек мĕнле тĕллеве те пурнăçлама пултаратпăр!

Хăйсен ĕç-хĕлне Чăваш Республикин территорийĕнче пурнăçлакан тĕнсен тата наци пĕрлĕхĕсен представителĕсене тăнăçлăха тата пĕрлĕхе сыхласа упрас енĕпе тăвакан пархатарлă ĕçĕшĕн уйрăммăн тав тăватăп.

Пурне те çирĕп сывлăх, мĕн пур ырă ĕçре ăнăçу сунатăп, çемьесене телей, юрату, ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**Михаил ИГНАТЬЕВ.**

* * *

Чăваш Енре пурăнакансене уяв ячĕпе РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ **Михаил Бабич** та саламланă.



# Чăваш хресченĕ: ӳсĕм пур савăнмалăх!

● ➡ 4-5 стр.

## *Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ*

**Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ çинчен**

Чăваш Республикин Конституцийĕн 72 статйин 6 пункчĕпе килĕшӳллĕн **çапла йышăнатăп:**

1. **Александр Степанович Иванова** малтанхи должноçран хăтарса Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ пулма çирĕплетес.
2. Çак Указ ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, октябрь, 29, 147 №.



**Александр Степанович Иванов** И.Я.Яковлев ячĕллĕ патшалăх педагогика институтĕнчен /1979, специальноçĕ – математика/, Мускав патшалăх социаллă университетран /1998, юриспруденци/ вĕренсе тухнă. 1979-1984 çулсенче Шупашкар районĕнчи вĕренӳ учрежденийĕсенче /математика вĕрентекен – шкул директорĕ/, 1984-1988 çулсенче ВЛКСМ райкомĕн тата обкомĕн яваплă должноçĕсенче ĕçленĕ. 1988-2001 çулсенче – Шупашкар районĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, 2001-2010 çулсенче – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Аппаратĕн ертӳçи. 2014 çулхи октябрь уйăхĕн 29-мĕшĕччен – Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи.

Александр Иванова РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин, ЧР Патшалăх Канашĕн Хисеп хучĕсемпе, «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медалĕпе, «РСФСР çутĕç отличникĕ» паллăпа наградăланă.

**Чăваш Республикин хисеплĕ çыннисем!**

**Сире Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлатпăр!**

ЕДИНАЯ РОССИЯ

Ку уяв Раççей халăхĕн пĕрлĕхне, наци килĕшӳлĕхне тата Тăван çĕршыва çирĕплетессишĕн пурте пĕр шухăшлă пулнине палăртать. Патриотлăх, Тăван çĕршыва юратни тата унăн умĕнчи тивĕçе ăнлани – вĕсем кирек хăш вăхăтра та тĕп пахалăхсем тата вăйлă Раççейĕн ăс-хакăлпа шухăш-кăмăл тĕрекĕ.

Сире, хаклă ентешĕмĕрсем, ыррипе лайăххине, тăнăçлăхпа телей, пирĕн юратнă çĕршыв ырлăхĕшĕн тăвакан пĕтĕм ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем сунатпăр.

**«ЕДИНАЯ РОССИЯ» партин Чăваш Енри уйрăмĕ.**

ĔÇЛĔ ТĔЛПУЛУСЕМ



# Кунашкал завод çĕршывĕпе те çук

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кĕçнерникун Çĕнĕ Шупашкарта çурт тулашне капăрлатакан плитка туса кăларакан производствăна хута яма хутшăнчĕ. Савăнăçлă мероприятире çавăн пекех ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илÿ министрĕ Владимир Аврелькин, Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Олег Бирюков, «Çар - Промышленноç Банкĕ» АХО директорсен канашĕн председателĕ Юрий Колток пулчĕç.***

Республика Пуçлăхĕ чăваш усламçисем тата банк пĕр-пĕринпе ăнланса çыхăну тытнине, ыранхи куншăн ĕçлекен инвестици проекчĕ шанчăклă пулнине палăртрĕ.

– Çĕнĕ Шупашкара аталанма çĕнĕ майсем усăлаççĕ. Урăх шайри ĕç тухăçĕллĕ, пысăк технологиллĕ ĕç вырăнĕсем пулаççĕ. Шалу шайĕ çакăнтан килет те, – терĕ Михаил Игнатьев. – Заводăн ку чухнехи линийĕсенче туса кăларакан продукци çĕршывра тек çук. Унччен Раççей строителĕсем ăна Евросоюз çĕршывĕсенчен туяннă. Кунта 170 çын ĕçе вырнаçнă, ытларах – çамрăксем. Вăтам ÿсĕм 36 çулпа танлашать.

Юрий Колток пысăк пĕлтерĕшлĕ предприяти тума пур енлĕн пулăшнăшăн республика Пуçлăхне тав турĕ. Кунта туса кăларакан таварпа ытти регион та тухăçлă усă курасса систерчĕ. «Банк çĕршыв, халăх умĕнче яваплăх тытать. Эпир Раççейĕн экономикине пулăшма тивĕç. Ачасем тата мăнуксем валли промышленноçа аталантармалла. Чăваш Енре ку енĕпе лайăх услови туса хунă. Республикăри производствăна аталантарма малашне те пулăшăпăр».

«Экоклинкер» ООО гендиректорĕ Александр Краснов импорта ылмаштаракан производствăна хута ярас шухăш 2009 çултах çуралнине, компани малашне Чăваш Енре çакнашкал тата 2 комплекс çĕклессе пĕлтерчĕ.

Комплекса Çĕнĕ Шупашкарта туни ăнсăртран мар. Инвестицин лайăх лару-тăрăвĕ, пысăк квалификациллĕ специалистсем пурри тата чĕртавар çăлкуçĕ çывăхра пулни пулăшнă. Кунта 2 завод пулмалла. Пĕрне виçĕмкун хута ячĕç ĕнтĕ. Тепри 2015 çулхи çу уйăхĕнче ĕçleme тытăнмалла. Инвестици калăпăшĕ 855 млн тенкĕпе танлашать. Кунта брусчатка тата кирпĕч туса кăларĕç. Паллах, вăл ахаль йышши мар. Клинкер сăмахпа çыхăннă. Клинкер керамики пысăк пахалăхлă, çирĕп, сивве тÿсĕмлĕ.

Михаил Игнатьев журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май çакна палăртрĕ: «Мĕнпур усламçа аталанма пĕрешкел услови туса панă. Республика Пуçлăхĕн, министрсен, муниципалитет йĕркелевĕн пуçлăхĕсен предпринимательсен пулăшусисем пулмалла. Мĕншĕн тесен вĕсем çĕнĕ производство йĕркелеме хăйсен пурлăхĕпе, харпăрлăхĕпе теветкелленеççĕ. Влаç енчен ырă лару-тăру туса хурсан, ыранхи куна çирĕп шанма май парсан вĕсем хăйсен проекчĕсене пурнăçлаççех».

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

## РФ Президенчĕ саламланă

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева тата республикăра пурăнакансене Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламланă.

"Раççей халăх пĕрлĕхĕн йăлисемпе яланах вăйлă пулнă – аслă тата пархатарлă тĕллевсем тавра, çĕршывăмăр ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕн ячĕпе чăмăртаннă. Тăван çĕршыва юратасси, наци историне, вăрçăри паттăрлăха, аслă ăрусен ĕçри çитĕнĕвĕсене хисеплесси ĕмĕртен ĕмĕре, ăруран ăрăва куçса пынă. Çакă пирĕн патшалăхăн çирĕп никĕсĕ пулса тăрать, çĕршыв умĕнче тăракан пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕллевсене ăнăçлă пурнăçлама пулăшать. Сире палăртнă плансене пурнăçлама тата пĕтĕм ыррине сунатăп", – тенĕ саламра.

**К.АНДРЕЕВ.**

## Банк пулăшать

Октябрь уйăхĕн 31-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев "Çар-Промышленноç Банкĕ" коммерци банкĕн директорсен канашĕн председателĕпе Юрий Колтокпа курнăçнă. Тĕл пулăва çавăн пекех ЧР вице-премьерĕ – финанс министрĕ Светлана Енилина, экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин, "Экоклинкер" ООО гендиректорĕ Александр Краснов хутшăннă.

Канашлура Çĕнĕ Шупашкарта клинкер плиткипе брусчатки тата облицовка кирпĕчĕ туса кăлармалли инвестици проектне пурнăçламалли ыйтусене, çавăн пекех республикăри предприятисем асăннă банкпа çыхăну тытса ĕçлессин малашлăхне сÿтсе явнă.

Михаил Игнатьев ВПБ ертÿçисене ĕçтешлĕхшĕн тав тунă, республикăра тÿрĕ кăмăлпа ĕçлес, хăйсен ĕçне аталантарас тĕллевлĕ предпринимательсемшĕн тан условисем йĕркеленĕ май бизнес влаçа шанасси вăй илсе пынине палăртнă.

Юрий Колток республика ертÿçисене импорта улăштаракан производствăсене аталантармалли лайăх условисем йĕркеленĕшĕн тав тунă. "Халĕ "Экоклинкер" клинкер плитки кăларакан завод уçатпăр, клинкер брусчатки тăвакан завод çĕкленет. Проект илĕртÿллĕ – ку çул-йĕре малалла аталантарăпăр. Пирĕншĕн Чăваш Енре ĕçлесси пысăк чыс, республика юлашки çулсенче вăйлă аталанать", – тенĕ вăл.

Банк ертÿçи ВПБ кунта сантехника производстви йĕркелеме тата çурт-йĕр тăвакан комбинат валли кредит ресурсĕсем уйăрассипе çыхăннă плансем пурри çинчен те каланă. Чăваш Ен экономикине хывакан инвестицисен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 3 млрд тенкĕ патнелле пулмалла.

■ **Н.ЯКОВЛЕВ**

СЫХЛĂХ

# Хирĕçме сăлтав ан пултăр

***Республикăри лару-тăрушăн тăнăçлăх кăтартуллă, нацисен хутшăнăвĕсем тĕлĕшпе те пĕтĕмпех йĕркеллĕ – çаплах пулчĕ Чăваш Республикинчи терроризмпа кĕрешес енĕпе ĕçлекен комиссин ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе кĕçнерникун иртнĕ ларăвĕнчи калаçу шăнăрĕ. Анчах ку сисчĕвленмелли самантсем çуккине пĕлтермест.***

Вĕсене культура министрĕ Вадим Ефимов пайăррăн палăртрĕ. Калăпăр, азербайджансен Чăваш Енри диаспоринче хирĕç тăру сĕмĕ палăрнă – тивĕçлĕ тытăмсем ăна вăхăтра асăрханă май çивĕчлĕхе сирме май килнĕ. Узбексемпе таджиксен республикăра икшер диаспора, вĕсен ертÿçисен хушшинче пĕри тепринчен аслăрах пулас кăмăл пурри палăрать. Эппин, ĕç-пуç шала кайиччен кунта та патшалăх органĕсем хушса кĕни вырăнлă. Министр шухăшĕпе, диаспорăсем пĕтĕссе пĕрле ĕçлениччен ырри çук, çавна май вĕсен ертÿçисене пĕрлешмешкĕн ÿкĕте кĕртмелле. Çакă вĕсене хăйсен йăхташĕсен ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе тухăçлă ĕçleme пулăшĕ кăна.

Михаил Игнатьев вара мăсăльмансен тĕн управленийĕнчи çивĕчлĕхпе кăсăкланчĕ – мĕн пулса иртет? В.Ефимов палăртнă тăрăх – чăнах та, тăнăçлăх çукки сисĕнет. Хăш-пĕр прихут вырăнти управлени тытăмĕнчен тухса Тĕп тĕн управленийĕн пăхăнăвне куçнă. Канаш хулинче, Комсомольски, Патăрьел районĕсенче çавнашкал кăмăллă прихутсем татах пулнă-мĕн. «Эпир ку енĕпе çынсемпе курнăçрăмăр, нумаях пулмасть Комсомольски районĕнче тĕлпулу ирттертĕмĕр. Асăннă туртăма «лăплантартăмăр» теме юрать, çапах ыйтусем пур: мечĕтсем вырнаçнă çĕр, пурлăх тĕлĕшпе – вĕсене татса памалла», – пĕлтерчĕ Вадим Петрович.

Вĕренÿ министрĕ Владимир Иванов çамрăксем экстремизм йышши киревсĕр пулăмсен тыткăнне лекесрен сыхланса ирттерекен йышлă мероприяти çинчен каласа панă май яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа ĕçпе тивĕçтерни уйрăмах пĕлтерĕшлине палăртрĕ. Çав шутра, сăмахран, студентсен строительство отрячĕсене йĕркелесе. ССО юхăмĕ пĕр вăхăт вуçех пăчланнăччĕ, халь тепĕр хут вăй илсе пыни сисĕнет.

Ют çĕршывсенчен кунта вĕренме килнĕ студентсене куçран вĕçертме юраманни пирки те сăмах пулчĕ. Вĕсен шучĕ ÿссе пынине тĕпе хурсан – пушшех. Вĕренÿ министрĕ юлашки çулсенче Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче те чикĕ леш енчен килнĕ çамрăксем нумайланнине палăртрĕ – Узбекистан, Таджикистан çамрăксем пĕлÿ илеççĕ. Ытти аслă вĕренÿ заведенийĕ те çакнашкал çулпа утасшăн. Ют çĕршыв çамрăксĕн ытларах вĕренни – вĕсен ĕçне хакламалли индикаторсен шутĕнче, çавăнпа аслă шкулсем чикĕ леш енчен килекен яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа хапăл. Ку, паллах, лайăх, çав вăхăтрах сыхлăха çухатмалла мар: «Вĕсен хушшинче вăл е ку заданисене пурнăçлама килекенсем ан пулччăр», – асăрхаттарчĕ Михаил Васильевич.

Терроризмпа экстремизмран, национализмран сыхланас ĕçре, паллах, массăллă информаци хатĕрĕсен пĕлтерĕшĕ те пысăк. Информполитика министрĕн çумĕ Алексей Новиков пресса ку енĕпе пысăк ĕç пурнăçланине палăртрĕ: ĕç-пуçа çивĕчлетекен материалсем пулман – халăхсен туслăхне çирĕплетес тĕллевлисем кăна. Çапах, унăн шухăшĕпе, Наци телекуравĕ хальлĕхе Шупашкартан тухса районсене çитейменни унăн асăннă ĕçри хăвачĕпе туллин усă курма чăрмантарать. Чăн та, ку енĕпе ĕç пырать, территорисен «цифра танмарлăхĕ» çывăх вăхăтра пĕтмелле. Çийĕнчен М.Игнатьев сотовăй çыхăну пур çĕрте те кирлĕ пек ĕçлеменнине те аса илтерчĕ: «Федераци трасси çинчех хăшпĕр çĕрте, сăмахран, «Билайн» тытмасть. Ыттисен те çавнашкалах. Вĕсем тивĕçлĕ килĕшÿсем тунă, çĕр лаптăкĕсем илсе вышкăсем лартса тултарчĕç, çынсенчен укçа илеççĕ... Çакă та граждансем, уйрăмах çамрăксем хăйсене хăтлă туяссине витĕм кÿрет вĕт».

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

## Саламлатпăр

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2014 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнче кăларнă 680-мĕш указĕпе килĕшÿллĕн ĕçри çитĕнÿсемшĕн, нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата обществăра ĕçĕнчи хастарлăхшăн Чăваш Республикинчи Комсомольски районĕнчи потребительсен обществин канашĕн председательне **Евгений Иванович КАРПЕЕВА II степень «ТĂВАН ÇĔРШЫВ УМĔНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН» орден медалĕпе** наградăланă;

агропромышленноç комплексне аталантарас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи «Çăкăр» акционерсен усă обществин слесарь-юсавçине **Николай Иванович ПАВЛОВА «РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН АПАТ-ÇИМĔÇ ИНДУСТРИЙĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă.

ТĔП РЕДАКТОР СĂМАХĔ

# Эп – хресчен!..

*Çĕр çинче чи ĕçчен вичĕ йыш пур – кăткăсем,*
*пыл хурчĕсем тата чăвашсем.*

**Мустай КАРИМ,**
**Пушкăртстан халăх поэчĕ.**

«Эп – хресчен!.. Хулара пурăнакан хресчен...»

Çакăн пек пуçланать ман иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче çырнă сăввăмсенчен пĕри.

Эп – Хресчен! Эп паян та – Хресчен!

Çапла – эп ирхи шуçăмпа пĕрле комбайн штурвалĕ умне ларса тырă вырмастăп. Çапла – эп вăл е ку хуçалăхăн зоотехникĕ мар, манран кашни ĕнерен паян е ыран сĕт мĕн чухлĕ суса илесси килмест. Эп Ял хуçалăх министерствинче те ĕçлеместĕп, ирсерен хирте е фермăра тăхăнмалли ĕç тумĕ мар, урăхларах тум тăхăнатăп...

Çапах та эп – Хресчен!

Ман пеккисем – пин-пин!

Чăваш хресченĕ, Чăваш Ен хресченĕ!

Чи малтанах эп САН УМĂНТА пуçăма таясшăн. Сан Ĕçченлĕхӳшĕн. Сан Паттăрлăхушăн. Сан Шанчăклăхушăн. САНА ПУЛА ман сĕтелĕм çинче кашни кун пур ÇĂКĂРШĂН.

...Пĕтĕмпех асра – аннемĕрсемпе аттемĕрсем ирех ĕçе тухса кайни, ирхи шăнпа колхоз хирĕсенче çара алăпа удобрени сапни /перчетки-алси те çукчĕ-çке мăнтарăнсен!/, çаранта утă çулни, ăна лавсемпе турттарни, *малтан* колхоз улмине кăларни, *унтан, çанталăк пăсăлсан,* – килтине... Пĕтĕмпех асра. Тем тесен те Европăра та, Америкăра та çĕр ĕçченне Совет çĕршывĕнчи пекех йывăр килмен. Унта ăна, çĕр ĕçченне – ĕçленине кура тӳленĕ!.. Совет çĕршывĕнче вара?..

Паян мĕнлерех пурăнатăн эс, Раççей Хресченĕ, Чăваш Ен Хресченĕ? Çăмăл-и сана, йывăр-и сана?..

Çăмăл мар, пĕртте çăмăл мар! Кун пирки Владимир Путин та, Михаил Игнатьев та пĕлеççĕ /вăл, Чăваш Ен Пуçлăхĕ, хăй те – Хресчен-çке-ха!/ Çăмăл мар, анчах та – ĕçлемелле. Ĕçлемелле – çуркунне ака тумалла, кĕркунне – кĕрхи ĕçсене. Выльăх ĕрчетмелле, сĕт туса илмелле... Ĕçрен хăраканшăн – ĕçрен тарма сăлтавĕ пин-пин, ĕçрен хăраманнишĕн – ĕçĕ нихçан та пĕтмест /«вилсен те ĕç виç куна юлать» – кун пек чăваш çеç калама пултарнă!/

Ман фермер-тусăмсем тата ял хуçалăх предприятийĕсене ертсе пыракан пĕлĕшсем пытармасăр каланă тăрăх – вĕсем хăйсен çутă шанчăкне тахçан Чăваш Ене ертсе пынă, унтан Раççей ял хуçалăхĕн ертӳçи пулса тăнă паллă ентешĕмĕрпе питĕ çыхăнтарнă пулнă. Питĕ! Ара, епле çыхăнтармăн-ха – енteш-çке-ха, ялтан тухнăскер!.. Çук çав – шаннă кайăк йăвара пулмарĕ, паллă ентешĕмĕр, ман тусăмсем çирĕплетнĕ тăрăх, вĕсене пулăшас вырăнне çĕнĕ чăрмавсем «парнелет», хуçалăхсене пама тивĕçлине те партармасть. Эп вара, айванĕ, «чăвашшăн чăваш – чи хаклă юлташ!» тесе çирĕплететĕп...

Çапла, пĕртте çăмăл мар юлашки вăхăтра Чăваш Ен Хресченне /ăна Чăваш Ен Правительстви вăйĕ-халĕ çитнĕ таран çине тăрса пулăшать пулсан та/. Анчах та вăл пуçне усмасть – ирех тăрать те ĕçе пуçăнать, машинăпа техника паркне е выльăх-чĕрлĕх фермине васкать, уявра хаваслă юрă шăрантать, Пуласси Енне Шанчăкпа пăхать.

УЯВĂМĂР ячĕпе саламлать сана, Чăваш Ен Хресченĕ, «Хыпар» Издательство çуртĕ! Эс вăйлă та телейлĕ пулсан, Чăваш Ен те вăйлă та телейлĕ пулать!

Пурнатпăр-ха!

**Валери ТУРКАЙ.**

Госслужба занятости Чувашии

# Ĕçлевпе çыхăннă патшалăх пулăшăвĕ – "пĕр чӳрече" мелĕпе

**Халăха ĕçпе тивĕçтерес енĕпе "пĕр чӳрече" мелĕпе мĕнле пулăшу илме пулать?**

**А.МОРОЗОВА,** Шупашкар хули.

Хурав: 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службипе "Патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсемпе тивĕçтерекен нумай функциллĕ центр" АУ пĕрле ĕçлесси çинчен килĕшӳ çирĕплетнĕ. Ăна тĕпе хурса 2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен республикăри патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсемпе тивĕçтерекен нумай функциллĕ мĕнпур центр, çавăн пекех ку ĕçе хутшăнтаракан организацисен /ялти тĕслĕх вулавăшсен, информацие культура центрĕсен/ никĕсĕ çинче Чăваш Республикинчи ĕç рынокĕнчи лару-тăру пирки хыпарлас тĕлĕшпе патшалăх пулăшăвĕ параççĕ. Асăннă организацисенче ăна тивĕçмелли документсене "пĕр чӳрече" мелĕпе йышăнаççĕ. Патшалăх пулăшăвĕ – тӳлевсĕр.

**Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службы.**

# Чăваш хресченĕ: ӳсĕм пур савăнмалăх!

***Ĕнер ЧР аграрийĕсен элчисем Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Ял хуçалăх тата тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунне паллă турĕç. Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов агропромышленноç комплексĕн ĕç-хĕлне пĕтĕмлетрĕ.***



"Пирĕн хресченсем федераципе республикăн апат-çимĕç туса илес тĕлĕшпе йышăннă программисене пурнăçа кĕртме хастар хутшăнаççĕ, – терĕ вăл. – Кăçал патшалăх хыснинчен вĕсене 2,2 млрд тенкĕлĕх субсиди уйăрма пăхнă. Ӳлĕм ăна ытларах парĕç. Ял ĕçченĕсене пулăшу кӳнĕрен çĕнĕ техника туянаççĕ, паянхи пурнăçпа килĕшсе тăракан технологисене, производствăн халĕччен усă курман меслечĕсене ĕçе кĕртеççĕ, ял хуçалăх культурисен çĕнĕ сорчĕсене акаççĕ. Чăваш Енре çу е типĕ килет, е июль-сентябрь уйăхĕсенче çанталăк çумăра каять. Республикăна тĕветкеллĕ çĕр ĕçĕн регионĕсен йышне ахальтен кĕртмен. Кăçалхи çу та тӳнтерлĕхне ытлашшипех кăтартрĕ. Шăрăха пула Комсомольски, Патăрьел, Елчĕк, Шăмăршă районĕсенче пысăк тăкак тӳсрĕç. Мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсен умне тĕрлĕ йывăрлăх тухса тăчĕ пулин те аграрисем пысăк тухăç илессишĕн мĕн кирлине пурне те турĕç. Минерал удобренийĕ – самаях, çунтармалли-сĕрмелли япаласем çителĕклĕ туянчĕç. Çурхи культурăсене вăхăтра акрĕç, мĕн пур тухăçа тăкаксăр пухса кĕртрĕç. Пӳлмене 530 пин тонна ытла /ампар виçипе/ тырă хыврĕç. Ку – пĕлтĕрхинчен 3-4% нумайрах. Кĕлетсенчи тыр-пул хресчен умĕнчи производство-экономика, социаллă пурнăç ыйтăвĕсене татса пама май парĕ".

Вице-премьер килес çулхи тухăçшăн август-сентябрь уйăхĕсенчех пысăк ĕç тунине пĕлтерчĕ. Кĕрхи культурăсене 90 пин гектар – пĕлтĕрхинчен 18 пин гектар нумайрах – акнă. 184 пин гектар çинче /иртнĕ çулхинчен 30% ытларах/ кĕрхи çĕртме тунă. АПК ЧР халăхне апат-çимĕçпе туллин тивĕçтерет. Выльăхшăн паха апат шутланакан культурăсен лаптăкне çуллен пысăклатаççĕ. Сăмахран, кăçал 5,5 пин гектар çинчен тĕшĕлĕх кукурус пухса кĕртнĕ. Малашне ăна ытларах акасшăн. Доклад тăвакан çĕрулмипе пахча çимĕç тупăш аван панине, çавна май вĕсен лаптăкне ӳстермеллине палăртрĕ. Чăн та, çĕрулми пĕлтĕрхинчен сахалрах пухса кĕртнĕ. Сăлтавне ял ĕçченĕсен вăрлăх çитменнипе, 2012-2013 çулсенчи август-сентябрь уйăхĕсенче "иккĕмĕш çăкăр" йӳнĕлле сутăннипе ăнлантарчĕ. ЧР Пуçлăхĕ ăна ытларах туса илес тĕллевпе тивĕçлĕ йышăну тунă. Çĕрулмине хĕл каçармалли 20 управ проектне федераци шайĕнче ырланă. Çав объектсене ĕçе кĕртме хыснаран субсиди уйăрĕç. Федерацин Ял хуçалăх министерстви пахча çимĕç çитĕнтермелли теплицăсем тумалли программа йышăннă. Аграрисем çакăншăн бюджетран субсиди илĕç.

Мĕнпур харпăрлăхлă хуçалăхсенче кăçалхи 9 уйăхра 70 пин тонна аш-какай – пĕлтĕрхи çав тапхăртинчен 5,1% нумайрах – туса илнĕ, сĕт 2013 çулхи çав хушăри чухлех сунă. Ял хуçалăх организацийĕсенче аш – 16,3%, сĕт 4% ытларах хатĕрленĕ. Кăçал республикăра кашни ĕнерен вăтамран – 4600, "Ольдеевская" агрофирмăра – 7276, Елчĕк районĕнчи "Победа" хуçалăхра 7085 килограмм сĕт сăвасшăн.

> ХĂШĔ-ПĔРИ ÇУРМА ФАБРИКАТ ТУНĂ ЧУХ ПĂСĂК АШПА УСĂ КУРАТЬ. "КУ – УЛТАВ, – ПĔТĔМЛЕТРĔ ЧĂВАШ ЕН ПУÇЛĂХĔ. – ÇЫНСЕНЕ НАЧАР ПАХАЛĂХЛĂ АПАТ-ÇИМĔÇ ТУЯНМА СĔНМЕЛЛЕ МАР

Министр аграрисене кăсăклантаракан тепĕр ыйтăва уçăмлатрĕ. 2012-2014 çулсенче илнĕ кредитсен процент ставкине саплаштарма федераци бюджетĕнчен укçа куçарма пăрахнине лайăх пĕлетпĕр. Октябрь уйăхĕн 27-мĕшĕнче РФ Ял хуçалăх министерствин АПК ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссийĕн ларăвĕ иртнĕ, инвестици кредичĕсен процент ставкине çĕршыв хыснинчи укçаран субсидилессине тишкернĕ. "Çавна май республикăна кĕмĕл килессе шанатпăр", – терĕ ведомство ертӳçи. Çитес çулсенче производствăна ӳстерессишĕн пурнăçа кĕртме палăртнă инвестици проекчĕсемпе паллаштарчĕ. Шел те, иртнĕ çулсенче Улатăр, Куславкка, Çĕмĕрле районĕсенче агропрома модернизацилес тĕлĕшпе курăмлă пĕр ĕç те пурнăçламан. С.Павлов фермерсемпе килти хуçалăхсен ĕçне те хак пачĕ. Продукци туса илессипе ӳсĕм тунисене ырларĕ.



Уява пухăннисене республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев саламларĕ. "Телейлĕ пурнăç сунатăп, эсир пурнăçа лайăхлатассишĕн малашне те çине тăрса ĕçлессе шанатăп, – терĕ. – АПК ĕçченĕсемшĕн 2014 çул ăнăçлă иртет. Сирĕн производство кăтартăвĕсем аван. Çапах та хăвăртан: "Кăçал лайăхрах ĕçлеме пултарнă-и?" – тесе ыйтма пултаратăр. Эпĕ Правительство членĕсене те çак ыйтăва хуравлама сĕнетĕп. Ман шухăшпа, эсир кăçал лайăхрах кăтартусем тума пултарнă. Чăваш Ен çĕрулми туса илессипе Раççейре чи малтисен йышĕнчеччĕ. Анчах юлашки çулсенче хăш-пĕр регион пирĕнтен иртессишĕн тапаçланать. Вĕсем пире хăваласа çитсе иртсе каясшăн. 2013 çулта çутçанталăк сăлтавне пула çĕрулмин пысăк тухăçне пухса кĕртеймерĕмĕр, вăрлăх çителĕклĕ хываймарăмăр. Анчах çитĕнӳ тăвассишĕн ăнтăлакансем ниме пăхмасăр банкран кредит илсе вăрлăх туянчĕç, "иккĕмĕш çăкăра" хĕл каçарма управ турĕç. Унран пысăк тупăш илеççĕ. Çакă пуриншĕн те ырă тĕслĕх вырăнĕнче пултăр. Малашне çĕрулми туса илекен ятарлă хуçалăхсене вăйлатмаллах. Вĕсем ура çинче çирĕп тăрсан çеç республикăра млн тонна "иккĕмĕш çăкăр" пухса кĕртес шанăç çирĕпленĕ. Ку тĕллеве пурнăçласан кăна ĕç укçине ӳстерĕпĕр. Хальхи вăхăтра ял çамрăкĕсем 10 пин тенкĕ укçашăн фермăра е машина-техника паркĕнче пилĕк хуçмаççĕ".

М.Игнатьев ял хуçалăх ĕçченĕсене сутлăх хак тивĕçтернине, çавна май аграрисен производствăна вăйлатмаллине, Европăран Раççее апат-çимĕçĕн халăха куллен кирлĕ темиçе тĕсне кӳме чарнăран ӳсĕм тĕллевне пурнăçлама ансатраххине палăртрĕ. Канашри сыр хатĕрлекен завода ĕçлеттерсе яма ыйтрĕ. Çĕнĕ производство йĕркелекен тирпейлекен предприятисем банкран илекен кредит процентĕн ставкине пĕтĕмпех республика хыснинчи укçаран саплаштарнине аса илтерчĕ.

Апат-çимĕç хатĕрлекен предприятисене тӳрремĕнех пырса тивекен ыйтăва пысăк вырăн уйăрчĕ. Хăшĕ-пĕри çурма фабрикат тунă чух пăсăк ашпа усă курать. "Ку – ултав, – пĕтĕмлетрĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ. – Çынсене начар пахалăхлă апат-çимĕç туянма сĕнмелле мар. Хăвăр ĕçе палăрмаллах лайăхлатмалла. Пахалăха ӳстерсен кăна сирĕн продукцие çынсем тупăшсах туянĕç".

Михаил Васильевич биологи тĕлĕшĕнчен таса апат-çимĕçе халăха уççăн тата туллин кăтартассишĕн тăрăшма, унпа паллаштаракан информаци технологийĕсемпе тухăçлă усă курма ыйтрĕ. Юлашки çулсенче республикăра ресторансем мар, вун-вун заводпа цех хута яни, уйрăммăн илсен Китай предпринимателĕсем Чăваш Ене темиçе миллиард тенкĕлĕх инвестици хывасси, ытти проект çинчен хавхаланса каларĕ. Производствăра пысăк ӳсĕм тунисене Раççей тата республика наградисене пачĕ.

■ **Юрий СЕРГЕЕВ.**
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăнӳкерчĕкĕсем

***Кĕçнерникун Çĕрпӳ районĕнчи Пысăк Чăрăш ялĕнче культурăпа библиотека аталанăвĕн центрне уçрĕç. Çуртне иртнĕ ĕмĕрте тунă, кĕске хушăра тĕпрен юсанă. Савăнăçлă уява Ямаш ял тăрăхĕнче пурăнакансем йышлă пуçтарăнчĕç.***

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Сергей Артамонов учреждение купăс парнелерĕ. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Чăваш бройлерĕ» АУО генеральнăй директорĕ Вадим Николаев – ноутбук, ЧР культура министрĕн çумĕ Татьяна Казакова 400 пин тенкĕлĕх свидетельство хутне пачĕç. ЧР Сывлăх сыхлавĕн министерствин пай ертӳçи Евгения Гурьянова, РФ автоçул надзорĕн службин республикăри управленийĕн пуçлăхĕ



ПĔТĔМЛЕТӲ

# Çĕрпӳсем производствăна аталантараççĕ

Юрий Титов, районти ветерансен организацийĕн ертӳçи Юрий Егоров пухăннисене Ял хуçалăх тата тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕн ячĕпе саламларĕç. Çуртăн икĕ пӳлĕмĕнче ФАП уçрĕç. Ăна çĕнĕ медоборудованипе тивĕçтернĕ.

Район аграрийĕсем Ял хуçалăх ĕçченĕсен кунне Сăнав поселокĕнчи культура çуртĕнче паллă турĕç. Райадминистраци пуçлăхĕ С.Артамонов вĕсен кăçалхи 9 уйăхри ĕç-хĕлне пĕтĕмлетрĕ. «Ял хуçалăх организацийĕсем асăннă хушăра пĕлтĕрхи çав тапхăртинчен 2,2 хут нумайрах тупăш илчĕç, – терĕ вăл. – Патшалăх хресченсене 58,5 млн тенкĕ парса пулăшрĕ. Вĕсен ĕç лайăх кайнипе пĕрлех шалу /кашни уйăхра 15794 тенкĕ/ ӳсрĕ. Ку республика аграрийĕсен вăтам шалăвĕнчен чылай пысăкрах».

Шăрăх çанталăк АПК умĕнчи тĕллевсене ăнăçлă пурнăçлама Çĕрпӳсене те чăрмантарнă. 848 гектар çинчи культурăсем типсе пĕтнĕ. Апла пулин те вĕсем 9 уйăхра ял хуçалăх производствине 13% ӳстернĕ. 45,7 пин тонна тырă пухса кĕртсе районсен хушшинче иккĕмĕш вырăна тухнă. Тухăç кашни гектартан вăтамран 23,7 центнер /республикăра – 22/. «Чăваш бройлерĕн» кăтартăвĕ – 32,8, Раççей Ял хуçалăх академийĕн Çĕрпӳ районĕнчи институчĕн – 32,7. Çĕрулми тухăçĕ республикăн вăтам кăтартăвĕнчен лайăхрах. 280-шар центнер пахча çимĕç пухса кĕртнĕ.

«Килес çул çĕртен тупăш ытларах илессишĕн кĕркуннех тăрăшрăмăр, – терĕ Сергей Артамонов. – Культурăсене 7 пин гектар /пĕлтĕрхинчен 2,5 пин гектар нумайрах/ акса тĕллеве 95,9% пурнăçларăмăр. «Авангард» обществăн «Çĕрпӳ беконĕ» филиалĕ, «Чăваш бройлерĕ», «Вурнарец», «Цивиль», «Гвардия» хуçалăхсем, А.В.Хорошавин ХФХ кĕрхисене акмалли плана тултарчĕç.

Мĕнпур харпăрлăхлă хуçалăхсем выльăхпа кайăк-кĕшĕкрен аш пĕлтĕрхи чухлех, ял хуçалăх организацийĕсем кăштах ытларах илнĕ. Кашни 100 гектар çĕр пуçне ял хуçалăх продукцийĕ туса илессипе, мăйракаллă шултра выльăха самăртассипе кăтартăва лайăхлатнă. Ку енĕпе «Память Ульянова», «Цивиль», «ВДС» хуçалăхсенче аван ĕçлеççĕ.

Мĕнпур харпăрлăхлă хуçалăхсенче сĕт иртнĕ çулхинчен сахалрах, ял хуçалăх организацийĕсенче 19% нумайрах сунă, «ВДС» – 33%, «Память Ульянова» – 5%, «Гвардия» тата «Колос» хуçалăхсенче 2-шер % ытларах туса илнĕ. «Шел те, асăннă тапхăрта килти хуçалăхсенче 679 ĕне катăлнăран продукци сахалрах сутаççĕ, – пĕлтерчĕ докладçă. – Ял хуçалăх организацийĕсенче мăйракаллă шултра выльăх – 24%, вăл шутра ĕне 19% хушăнни савăнтарать. Сысна кĕтĕвĕ кăштах пĕчĕкленнине «Çĕрпӳ беконĕ» аш нумайрах сутнипе ăнлантаратпăр. Пĕрлехи хуçалăхсенче кайăк-кĕшĕк йышланнă».

Иртнĕ виçĕ çулта «Богатырь», «Тиуши», «Спутник», «Дружба» хуçалăхсем, ытти колхоз-совхоз усă курнă, ку ĕмĕрте пушă выртнă вун-вун гектар çĕре пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Техникăн 120 хатĕрне, уйрăммăн илсен кăçал «ВДС» – 29 млн, И.Н.Федоров ХФХ 17 млн, «Çĕрпӳ беконĕ» 12 млн тенкĕлĕх машина-трактор туяннă. Инвестицин 16 проектне пурнăçласа 60 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ.

Пĕтĕмлетсе çакна каламалла: районта ырă ĕç сахал мар. Çапла пахаларĕ ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов. Çакăнпа пĕрлех выльăхран продукци ытларах илес тĕллевпе çĕнĕ фермăсем тумаллине аса илтерчĕ. Отрасльте çитĕнӳ тунисене республикăпа район наградисене пачĕç.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ.**
Николай ПОРФИРЬЕВ сăнӳкерчĕкĕ

ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

# Ушкăнпа вăй хурсан

***Ял хуçалăх производствин паллă ертӳçи Александр Смалайкин Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Искра» колхоза нумай çул пултаруллă ертсе пынă. Çамрăксем ырă тĕслĕхпе хавхаланса Александр Дмитриевич пек пулма тăрăшнă. Çав шутрах пĕчĕклех çĕр ĕçĕпе пиçĕхсе çитĕннĕ Николай Лисаев та.***

1987 çулта Вăрнарти совхоз-техникумран агронома вĕренсе тухнă хыççăн Николай Иванович тăван тăрăха таврăннă. Мăн Этменри выльăх апачĕ хатĕрлекен бригадăна, каярах Лопари сурăх фермине ертсе пынă.

Тăван Хирлӳкасси ялĕнчи 400 ĕне вырнаçакан комплекс управляющийĕн тивĕçĕсене пурнăçлама шансан унăн хастарлăхне хуçалăх ертӳлĕхĕ те асăрхать. Çулталăкра кашни ĕнерен сĕт сăвасси виçĕ çул хушшинче 1300-тен 4800 килограма çитет. Сысна çăвăрлаттарасси те ăнăçлă аталанать. Выльăх пăхакансем кашни амаран çуллен 22,3 çура илеççĕ. «Искра» колхоз вăл çулсенче тырă тухăçне 27-28 центнера çитернĕ.

– 1996 çултаччĕ пулас, халĕ лайăхах ас тумастăп, Чăваш Енĕн вăл вăхăтри ертӳçи мана уявра тĕрлĕ тĕспе кăтартакан телевизор тата укçан преми пачĕ. Эпĕ «Республикăри чи лайăх ферма заведующийĕ» ята тивĕçрĕм, – хавхаланса каласать Николай Иванович. – 2000-2011 çулсенче Туканашри чăх-чĕп фабрикин директорĕ пултăм. Юлашки вăхăтра хресчен-фермер хуçалăхне ертсе пыратăп.

ХФХ 1500 гектар лаптăкра ыраш, кĕрхи тата çурхи тулă туса илет. Çав вăхăтрах кайăк-кĕшĕк те ĕрчетет. Кăçал 34 пин – ашлăх чăх, 10 пин кăвакал çитĕнтернĕ.

Машина-трактор паркĕ çулсерен çĕнелет, хуçалăх кредитпа вăхăтра татăлать. Çав кун Патшалăх техника надзорĕн Хĕрлĕ Чутай тата Çĕмĕрле районĕсенчи ял хуçалăх техникине пăхса тăракан Николай Петров пынăччĕ, ХФХ парка хĕле епле хатĕрленипе кăсăкланчĕ. «Питĕ лайăх, – терĕ Николай Михайлович. – Николай Иванович техникăна чун-чĕререн хисеплет, хакне аван пĕлет».

Н.Лисаев тăрăшуллă механизаторсене ятран асăнчĕ: Юрий Тибогайкин, Геннадий Михеев, Георгий Судаков, Михаил Сорокин, Владимир Кальматкин. Вĕсемсĕр вăл алăсăр пекех.

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Владимир Храмов ХФХ ĕçне пысăк хак пачĕ. Николай Лисаев чăнласах хастар çын, çав вăхăтрах пуçаруллă та. Çавăнпах хуçалăхĕ ӳсĕмлĕ аталанать. Николай Иванович çитес çул валли те пысăк тĕллевсем палăртнă: выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк ытларах ĕрчетме çĕнĕ объектсем тумалла, сушилка комплексне хута ямалла...

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ.**
Илья КЛОЧКОВ сăнӳкерчĕкĕ



● *Николай Лисаев, Николай Петров, Владимир Храмов.*

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА ноябрь, 3-9

## 3 тунтикун

### 1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 М/ф «Хортон»
8.00 Х/ф «ПРИХОДИТЕ ЗАВТРА...»
10.10 «Лермонтов»
12.15 Х/ф «ДЕЛО БЫЛО В ПЕНЬКОВЕ»
14.10 Х/ф «ПОЛОСАТЫЙ РЕЙС»
15.50, 18.15 «Голос. Дети» Лучшее
18.45 Х/ф «КРАСОТКА» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «УЛЫБКА ПЕРЕСМЕШНИКА» 12+
23.20 «Александр Градский. Обернитесь!» 12+
0.25 Х/ф «ЛИЦО СО ШРАМОМ» 16+
3.30 «В наше время» 12+
4.40 «Россия от края до края»

### РОССИЯ 1

5.55 Х/ф «КАК ЖЕ БЫТЬ СЕРДЦУ» 12+
8.05 Х/ф «ОДИНОКИЕ СЕРДЦА» 12+
12.00, 14.20 Х/ф «КЛЮЧИ ОТ ПРОШЛОГО» 12+
14.00, 20.00 Вести
20.30 Х/ф «ПОДДУБНЫЙ» 12+
23.00 Х/ф «ТРАВА ПОД СНЕГОМ» 12+
2.50 Х/ф «УСТРИЦЫ ИЗ ЛОЗАННЫ» 16+
4.20 «Моя планета» представляет. «Мастера» «Чудеса России» 12+
5.25 Комната смеха

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35 Х/ф «АЛЕКСАНДР НЕВСКИЙ»
12.20 Д/ф «Николай Черкасов»
12.45 Юбилейный концерт Национального академического оркестра народных инструментов России имени Н. П. Осипова в КЗЧ
14.10 «90 лет Леониду Зорину. «Театральная летопись. Избранное»
14.55 Спектакль «ВАРШАВСКАЯ МЕЛОДИЯ»
16.55, 1.40 Д/ф «Летающие монстры»
17.35 Звезды мировой оперы Ильдар Абдразаков, Василий Ладюк и Кристина Мхитарян в «Новой опере»
18.55 По следам тайны. «Молчание пирамид»
19.40 Д/ф «История Преображенского полка, или Железная стена»
20.25 Х/ф «ТИХИЙ ДОН»
22.15 «Линия жизни»
23.15 Х/ф «ЛЮДОВИК XI. УГРОЗА КОРОЛЮ»
0.50 Билли Джоэл. Концерт на стадионе «Ши»
2.25 М/ф «Сказки старого пианино»

### НТВ

6.00 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
7.50, 8.15 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20, 13.25, 16.20 Т/с «СОБР» 16+
19.40 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
0.20 Х/ф «ТАНЕЦ ЖИВОТА» 16+
2.10 Главная дорога 16+
2.45 Дикий мир 0+
2.55 Т/с «ПЕРЕДЕЛ. КРОВЬ С МОЛОКОМ» 16+
4.50 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ТНТ

7.00 М/с «Турбо-Агент Дадли» 12+
7.30 М/с «Рыцари Тенкай» «Суперумение Трибьютона» 12+
7.55 М/с «Пингвины из «Мадагаскара» 12+
8.20 М/с «Озорные анимашки» 12+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+
10.00, 10.30, 11.00, 11.30, 12.00, 12.30, 13.00, 13.30, 14.00, 14.30, 15.00, 15.30, 16.00, 16.30, 17.00, 17.30, 18.00, 18.30, 19.00, 19.30, 20.00, 20.30, 21.00, 21.30, 22.00, 22.30 Т/с «РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ» 16+
23.00 «Дом-2. Город любви» 16+
0.00 «Дом-2. После заката» 16+
1.00 Х/ф «МАГНОЛИЯ» 18+
4.45 «ДЖОУИ-2» 16+

5.10 Х/ф «ТАЙНЫЕ АГЕНТЫ» 16+
6.05 Т/с «ПРИГОРОД-2» 16+
6.45 Т/с «САША + МАША» 16+

### ТВЦ

5.15 Х/ф «ЖЕНИХ ПО ОБЪЯВЛЕНИЮ» 16+
7.00 Х/ф «ГАРДЕМАРИНЫ, ВПЕРЕД!»
10.00 Х/ф «ИЛЬЯ МУРОМЕЦ»
11.30, 14.30, 21.00 События
11.45 Х/ф «ОТПУСК ЗА СВОЙ СЧЕТ» 6+
14.45 «Пахмутова и Добронравов. Мелодия и Орфей» Фильм-концерт 6+
16.20 Х/ф «ВОПРЕКИ ЗДРАВОМУ СМЫСЛУ» 16+
18.10, 21.20 Х/ф «МАНЕКЕНЩИЦА» 16+
22.55 Кино XXI века. «Московские сумерки» 16+
0.45 Х/ф «ХОЛОСТЯК» 12+
3.50 Д/ф «Тайны криминалистики. Противостояние» 16+
4.35 Д/ф «Город будущего» 16+

### РЕН

5.00 Дорогая передача 16+
5.30 «Легенды Ретро FM» 16+
10.00 Т/с «ЗНАХАРЬ» 16+
0.50 Х/ф «СТАЯ» 16+
3.00 Х/ф «ПОЕДИНОК» 16+
4.40 Т/с «МЕЧ» 16+

### Чăваш Нацителекуравĕ

09.00 «Мои песни – творцы моей судьбы» концерт А.Уляндиной /6+/
17.00 «Человек рассеянный». Спектакль Русского драматического театра /12+/
18.30 «Эх, юррăм, янăра» /12+/
19.00 «О, кăна кĕрсе курмалла». Водительсен кунне халалланă концерт /12+/

### Чăваш Наци радиовĕ

7.10-8.00 Янра, юрă! (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня (12+), 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чувашĕ (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун, ытларикун, юнкун, кĕçнерникун, эрнекун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 – Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12)

### Чăваш радиовĕ

6.10 Анонс передач
6.15 События
6.27 Салтак пăтти
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода

* * *

7.10 Çула тухсан
7.27 Паянхи кун
7.31 Мы - вместе
7.38 У Лукоморья
7.49 Кăмăлтан. Ирхи концерт
7.58-8.00 Погода

* * *

12.10 Будьте здоровы
12.24 Юрă çаврăмĕ
12.28 Тӳсĕм
12.38 Остров молодых
12.53-13.00 Пĕр сăвă

* * *

18.10-19.00 Театр у микрофона

## 4 ытларикун

### 1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 «Россия от края до края»
7.00 Х/ф «КУБАНСКИЕ КАЗАКИ»
9.00 «Флаг. Символ преемственности»
10.10, 21.30 Т/с «УЛЫБКА ПЕРЕСМЕШНИКА» 12+
12.10 Х/ф «КОРОЛЕВА БЕНЗОКОЛОНКИ»
13.40 Х/ф «ТРИ ПЛЮС ДВА»
15.20 Кино в цвете. «Весна на Заречной улице»
17.10, 18.15 Музыкальный фестиваль «Голосящий КиВиН» 16+
21.00 «Время»
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
23.55 «Прима из клана сопрано» 12+
1.00 Х/ф «ВЛЮБЛЕННЫЙ ШЕКСПИР» 16+
3.15 «В наше время» 12+
4.05 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

6.35 Х/ф «КАК ЖЕ БЫТЬ СЕРДЦУ-2» 12+
8.35 М/ф «Снежная королева»
9.55, 14.20 Х/ф «ПЕНЕЛОПА» 12+
14.00, 20.00 Вести
17.50 «Петросян-шоу» 16+
20.30 Т/ф «СОЛНЕЧНЫЙ УДАР» 12+
23.55 Х/ф «ЯЩИК ПАНДОРЫ» 12+
3.45 Комната смеха

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 Д/ф «Царица Небесная. Казанская икона Божией Матери»
10.35 Х/ф «МИНИН И ПОЖАРСКИЙ»
12.20 «Россия, любовь моя!». «Терские казаки»
12.50, 1.55 Д/ф «Страна птиц. Глухариные сады»
13.30 «Русские потехи»
14.50 Спектакль «ПРИСТАНЬ»
18.05 «Больше, чем любовь»
18.45 «Романтика романса» «Ты говоришь мне о любви»
19.40 Д/ф «История Семеновского полка, или Небываемое бываетъ»
20.25 Х/ф «ТИХИЙ ДОН»
22.20 «Линия жизни»
23.15 Х/ф «РИШЕЛЬЕ. МАНТИЯ И КРОВЬ»
1.00 Чайковский в джазе. Сергей Жилин и «Фонограф-Симфо-Джаз»
2.35 «Мировые сокровища культуры»

### НТВ

5.50 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ « 16+
7.50, 8.15 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20, 13.25, 16.20 Т/с «СОБР» 16+
19.45 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. «Зенит» (Россия) - «Байер» (Германия)
22.00 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
0.55 Х/ф «ШПИЛЬКИ» 16+
3.05 Квартирный вопрос 0+
4.05 Дикий мир 0+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ТНТ

7.00 М/с «Турбо-Агент Дадли» 12+
7.30 М/с «Рыцари Тенкай» «Удача Чуки» 12+
7.55 М/с «Кунг-фу Панда: Удивительные легенды» 12+
8.20 М/с «Озорные анимашки» 12+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+
10.00, 10.30, 11.00, 11.30, 12.00, 12.30, 13.00, 13.30, 14.00, 14.30, 15.00, 15.30, 16.00, 16.30, 17.00, 17.30, 18.00, 18.30, 19.00, 19.30, 20.00, 20.30, 21.00, 21.30, 22.00, 22.30 Т/с «УНИВЕР. НОВАЯ ОБЩАГА» 16+
23.00 «Дом-2. Город любви» 16+
0.00 «Дом-2. После заката» 16+
1.00 Х/ф «15 МИНУТ СЛАВЫ» 16+
3.20 «ДЖОУИ-2» 16+
3.50 Х/ф «ТАЙНЫЕ АГЕНТЫ» 16+
4.40 Т/с «ПРИГОРОД-2» 16+
5.10 Т/с «СЛЕДЫ ВО ВРЕМЕНИ» «ПОСЛЕДНИЙ ФИНИШ» 16+
6.00 Т/с «ТОЛЬКО ПРАВДА» 16+

### ТВЦ

5.25 Х/ф «ИЛЬЯ МУРОМЕЦ»
6.55 Х/ф «ГАРДЕМАРИНЫ, ВПЕРЕД!»
9.40 Х/ф «ДОБРОЕ УТРО»
11.30, 14.30, 21.00 События
11.40 «Благословите женщину» 12+
12.10 Х/ф «БЛАГОСЛОВИТЕ ЖЕНЩИНУ» 12+
14.45 Александр Балуев в программе «Приглашает Борис Ноткин» 12+
15.15 Х/ф «ДОМИК У РЕКИ» 12+
18.55 Т/с «ЛЮБОПЫТНАЯ ВАРВАРА» 12+
21.20 Приют комедиантов. «Щукины дети» 12+
23.15 Кино XXI века. «Географ глобус пропил» 16+
1.35 Д/ф «Звездность во благо» 12+
2.55 Д/ф «Кровавый спорт» 16+
4.20 Т/с «ИСЦЕЛЕНИЕ ЛЮБОВЬЮ» 12+
5.10 Т/с «ЖИВАЯ ПРИРОДА: ПРЯМОЙ РЕПОРТАЖ» 12+

### РЕН

5.00 Т/с «МЕЧ» 16+
4.20 «Адская кухня-2» 16+

### СТС

6.00 М/ф «Зимовье зверей» 0+
6.10 М/ф «Огневушка-поскакушка» 0+
6.25 М/ф «Коротышка - зеленые штанишки» 0+
6.35 М/ф «Хвастливый мышонок» 0+
6.45 М/ф «В порту» 0+
7.05 М/ф «Песенка мышонка» 0+
7.15 М/ф «Паровозик из Ромашкова» 0+
7.30 М/с «Клуб Винкс - школа волшебниц» 12+
8.00, 9.00 М/с «Смешарики» 0+
8.30 М/с «Флиппер и Лопака» 0+
9.20 М/с «Том и Джерри» 0+
9.35 Х/ф «ЗВЕЗДНАЯ ПЫЛЬ» 16+
12.00 Х/ф «ВОСЬМИДЕСЯТЫЕ» 16+
17.00 Х/ф «ВИЙ» 12+
18.30 Т/с «КУХНЯ» 16+
22.30 М/ф «Ронал-варвар» 16+
0.10 М/ф «Уоллес и Громит. Проклятие кролика-оборотня» 12+
1.45 Хочу верить 16+
3.15 «Не может быть!» 16+
4.05 М/ф «Снежная королева» 0+
5.05 «Животный смех» 0+
5.50 Музыка на СТС 16+

### Чăваш Наци телекуравĕ

09.00 «Чебоксары – город славы трудовой». Гала-концерт участников творческого фестиваля. Телеверсия /6+/
13.30 «Туслăх йывăçĕ» /12+/
14.00 «Святые места Чувашии» /6+/
14.30 «Таланты земли чувашской» /6+/
17.00 «Комфортный город» /12+/
17.30 «Пĕрре, иккĕ – хуйхă инкек мар». Чăвашла куçарнă фильм /12+/
19.30 «Шӳт хыççăн шӳт». Кулăшпа сатира театрĕн концерчĕ /12+/

### Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Рабочая смена. (12+) 19.30-20.00 На Олимпе. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

## 5 юнкун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «УЛЫБКА ПЕРЕСМЕШНИКА» 12+
14.20, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.10 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Политика» 16+
1.20 «Городские пижоны» «Мотель Бейтс» 18+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Провал Канариса» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
0.45 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
1.45 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.10 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «БАР «ЛИБЕРТИ»
12.05 Д/ф «Мстерские голландцы»
12.20, 20.10 «Правила жизни»
12.45 «Красуйся, град Петров!»
13.15 Х/ф «ЛЮДОВИК XI. УГРОЗА КОРОЛЮ»
15.10 Academia
15.55 Д/ф «Дом на Гульваре»
16.55 «Маскарад без масок» Российский государственный камерный «Вивальди-оркестр»
18.15 Д/ф «Евгений Тарле. Наука выживать»
19.15 Главная роль
19.30 «Абсолютный слух»
20.40 «Спокойной ночи,малыши!»
20.55 «Больше, чем любовь»
21.35 Власть факта. «Вирус нацизма»
22.20 Д/ф «Кира»
23.30 Х/ф «ДОЛГИЕ ПРОВОДЫ»
1.05 В. А. Моцарт. Концертная симфония
2.40 «Мировые сокровища культуры»

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 «До суда» 16+
9.15, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.30, 14.30, 17.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
15.00, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
22.30 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. «Манчестер Сити» (Англия) - ЦСКА (Россия)
0.45 «Лига чемпионов УЕФА. Обзор»
1.15 Х/ф «ШПИЛЬКИ-2» 16+
3.20 Т/с «ГОНЧИЕ» 16+
5.05 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.10 Х/ф «ТАЙНА ДВУХ ОКЕАНОВ» 12+
11.00 «Доктор И...» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «ДОМИК У РЕКИ» 12+
13.35 «Простые сложности» 12+
14.10 «Наша Москва» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Без обмана. «Трагедия сгущенки» 16+
16.00, 17.50 Х/ф «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» 12+
18.25 «Право голоса» 16+
19.50 Т/с «ЛЮБОПЫТНАЯ ВАРВАРА» 12+
22.30 Линия защиты 16+
23.05 «Советские мафии. Еврейский трикотаж» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35, 3.00 Петровка, 38 16+
0.55 Д/ф «Серж Гензбур. Парижский хулиган» 16+
1.35 Д/ф «Охота на детей» 18+
3.15 «Криминальная Россия. Развязка» 16+
3.55 Д/ф «Жажда жизни» 12+
4.40 «Благословите женщину» 12+
5.10 Т/с «ЖИВАЯ ПРИРОДА: ПРЯМОЙ РЕПОРТАЖ» 12+

### РЕН

5.00, 4.15 «Адская кухня-2» 16+
6.00, 18.00 «Верное средство» 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 13.00 Званый ужин 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Территория заблуждений» 16+
11.00 «Анна Чапман и ее мужчины» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
20.00, 0.00 Х/ф «ДОЛГИЙ ПОЦЕЛУЙ НА НОЧЬ» 16+
22.15 Дорогая передача 16+
23.30 «Смотреть всем!» 16+
2.15 Т/с «ТУЛЬСКИЙ ТОКАРЕВ» 16+

### Чăваш Наци телекуравĕ

18.30 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
18.45 «Ялан янра, чăваш сăмахĕ» /0+/
19.30 «Республика» информационная программа
19.45 «По существу» /12+/
20.00 «Качество» /12+/
20.30 «Спорт для всех» /12+/
20.45 «Акилбупсер»/6+/
21.00 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
21.30 «Республика» информационная программа
21.45 «По существу» /12+/

### Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30,15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 11.30-12.00 Çĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Социальный вопрос. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

### Чăваш радиовĕ

6.10 Паттăрлăх
6.24 Анонс передач
6.26 Журналистсем ентешсем
6.34 Имею право
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода

* * *

7.10 Диалоги о школе
7.22 Паянхи кун
7.28 Права потребителя
7.34 Поэзи çăлкуçĕ
7.45-8.00 Ирхи концерт

* * *

12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал

* * *

18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Юрă çаврăмĕ
18.29 Будни ЖКХ
18.49 -19.00 Вести-Чувашия

## 6 кĕçнерникун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «УЛЫБКА ПЕРЕСМЕШНИКА» 12+
14.20, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.10 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «На ночь глядя» 16+
1.15 «Городские пижоны» «Мотель Бейтс» 18+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Паразиты. Битва за тело» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
0.45 «Забытый вождь. Александр Керенский» 12+
1.45 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**9.00 Вспомни, солдат /на чувашском языке/**
**9.15 Доступная среда**
**9.30-9.55 Главные роли**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.10 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «БАР «ЛИБЕРТИ»
12.05 Д/ф «Лесной дух»
12.20, 20.10 «Правила жизни»
12.45 «Россия, любовь моя!». «Лето в Башкирии»
